26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 ЯНВАРЬ 15 ШӐМАТКУН 11(6506) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне РОКОССОВСКИЕ

Белоруссии фрончӗн ҫарӗсем, аякран ҫавӑрса илмелли ӑста маневр туса, паян, январӗн 14-мӗшӗнче, Белоруссин область центрне МОЗЫРЬ хулине тата КАЛИНКОВИЧИ ятлӑ пысӑк чугун ҫул станцийӗпе хулана — нимӗҫсен Полесье енчи оборонин тӗреклетнӗ паха пунктсене штурмласа тытса илнӗ.

МОЗЫРЬ тата КАЛИНКОВИЧИ хулисене тытса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче БАТОВ генерал-лейтенантӑн, БЕЛОВ генерал-лейтенантӑн, КРЮКОВ генерал-лейтенантӑн, КОНСТАНТИНОВ генерал-майорӑн, И. И. ИВАНОВ генерал-майорӑн, АЛЕКСЕЕВ генерал-майорӑн ҫарӗсем, артиллери генерал-полковникӗн КАЗАКОВАН, артиллери генерал-майорӗн БЕСКИНАН, артиллери генерал-майорӗн ИГНАТОВАН, артиллери генерал-майорӗн ЕГОРОВАН артиллерисчӗсем, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ПАНОВАН танкисчӗсем тата авиаци генерал-лейтенанчӗн РУДЕНКАН летчикӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас майпа МОЗЫРЬ тата КАЛИНКОВИЧИ хулисене ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «МОЗЫРСКИ» тата «КАЛИНКОВИЧСКИ» ятсем пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, январӗн 14-мӗшӗнче, 21 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗмтӑватӑ тупӑран ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, МОЗЫРЬ тата КАЛИНКОВИЧИ хулисене ирӗке кӑларнӑ хамӑрӑн паттӑр ҫарсене Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн Эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, МОЗЫРЬ тата КАЛИНКОВИЧИ хулисене ирӗке кӑларассишӗн ҫапӑҫса чапа тухнӑскерсене, ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршыв ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пыракан кӗрешӳре вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене—вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ
И. СТАЛИН.

1944-мӗш ҫулхи январӗн 14-мӗшӗ.

Вырӑнти удобренисем хатӗрлемелли уйӑхлӑх

Иртнӗ ҫул пирӗн колхозсем пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илчӗҫ. Кӑҫал та тухӑҫлӑ тырпул ҫитӗнтерес тесен, пирӗн агротехника кӑтартӑвӗсене пурне те тӗплӗн пурнӑҫласа пымалла. Ку тӗлӗшпе вара вырӑнти удобренисене хатӗрлесе, вӗсемпе пӗлсе усӑ курни калама ҫук пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Ахальтен мар ӗнтӗ ваттисем: «Тислӗк тӑксан, тырри тикӗс пулӗ», тенӗ.

ВКП(б) Обкомӗн XVII пленумӗ йышӑннӑ тӑрӑх, республикӑра вырӑнти удобренисене хатӗрлесе турттарас тӗлӗшпе **январӗн 15-мӗшӗпе февралӗн 15-мӗшӗ хушшинче** уйӑхлӑх пулса иртет. Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн, ВКП(б) райкомӗсемпе райисполкомсен Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обком бюровӗ «Чӑваш АССР-ӗнчи колхозсенче хӗллехи агротехника ӗҫӗсене туса ирттермелли план ҫинчен» йышӑннӑ постановление пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑҫа кӗртсе пырас пулать. Тислӗк, торф тата вырӑнти ытти удобренисене хатӗрлемелли тата турттарса тухмалли задание кашни колхозах, колхозри кашни бригадӑпа звенона ҫитермелле, вӑл задание мӗнле пурнӑҫланине кашни кун контрольлесе тӑмалла. ВКП(б) Обком пленумӗн решенине пурнӑҫласси кашни колхозӑн ответлӑ задачи пулса тӑрать.

Вырӑнти удобренисене хатӗрлесе турттарса тухас ӗҫ республикӑра шачах ҫителӗксӗр пырать-ха. Нумай колхозсем ку ӗҫе пуҫӑнман та. Ҫӗмахран. Октябрьски районри «Волга», «Единство» колхозсем, Вӑрмар районӗнчи «Ямбай», «Победитель» колхозсем тислӗк кӑларас пирки нимӗн те туман. Пӑрачкавпа Советски районӗсем тислӗк кӑларас плана пӗтӗмпе те 12-шер процент ҫеҫ пурнӑҫланӑ. Ҫак процент вӑл аҫӑннӑ районсенчи нумай колхозсем ку ӗҫе тытӑнманни ҫинчен калать.

Вырӑнти удобренисене—кӗле, фекалине тата ыттисене те хакламан колхоз руководителӗсене час-часах тӗл пулма пулать. Кӗле ҫырмана тухса тӑкас йӑлана халех пӗтерес пулать. Ҫак паха удобрение хакламе вӗренсе ҫитме тахҫанах вӑхӑт ӗнтӗ.

Малта пыракан колхозсем вырӑнти удобренисене хатӗрлесе хире кӑларас тӗлӗшпе хӗллехи кунсенче пимлӗн ӗҫлеҫҫӗ. Ҫапла тунипе вӗсем ҫуркуннехи хӗрӳ вӑхӑтсем ҫитиччен лашасене кантарма май тӑваҫҫӗ. Вӑрнар районӗ, ытти ӗҫсенчи пекех, уя тислӗк кӑларас тӗлӗшпе те малта пырать. Ҫак районри колхозсем январӗн 10-мӗшӗ тӗлне плана 60,8 процент пурнӑҫланӑ. Кольцовка ялӗнчи Ленин орденлӗ Сталин ячӗпе тӑракан колхоз ку таранччен уя 5000 лав ытла тислӗк кӑларнӑ.

Кашни гектартан 100-шер пӑт тырӑ туса илессишӗн кӗрешӳ пуҫарса, Вӑрнар районӗнчи комсомолецсемпе ҫамрӑксем кӑҫалхи хӗлре 3.250 центнер кӗл, 2.000 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухса хатӗрлеме, хире 500.000 лав тислӗк турттарса тухма, хӑйсен вӑйӗпе 6.000 гектар ҫине юр тытса хӑвармаа обязательство илчӗҫ. Вӗсем хӑйсен сӑмахне чыслӑн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Ҫак уйӑхлӑхра вӗсен примерӗпе республикӑри мӗнпур колхозсен ҫамрӑкӗсене хӗллехи агротехникӑллӑ мероприятисене пурнӑҫа кӗртме мобилизацилес пулать.

Уйӑхлӑх вӑхӑтӗнче вырӑнти удобренисене хатӗрлесе турттарса тухас ӗҫе тӗпренех лайӑхлатас пулать. Колхозсенче тислӗке тӗплӗн пухса пырса хире турттармалла, тислӗк тӑкмалли вырӑнсене малтанах палӑртса хумалла. Кунсӑр пуҫне колхозниксен килӗсенчи тислӗке колхозсен уйхирӗсене кӑларас ӗҫе те анлӑн организацилемелле, тислӗкшӗн колхозниксене тивӗҫлӗ ӗҫкунӗ шутласа памалла, ун ҫинчен колхозниксене пурне те тӗплӗн ӑнлантармалла. Хуласемпе район центрӗсенчен фекали турттарса тухас ӗҫ ҫине те тивӗҫлипе ҫавӑрса пӑхмалла, фекалипе компост тунӑ ҫӗрте усӑ курмалла.

Пирӗн кашни колхозникӗн хуҫалӑхӗнчех кӗл, кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ нумай пухса пыма май пур. Ҫак ӗҫе тӗрӗс организацилес пулать.

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн XVII пленумӗ кашни колхозах тата уйхир бригадине звенона тислӗк, торф тата ытти удобренисем турттармалли пилӗк кунлӑх заданисем пама хушрӗ. Вырӑнти удобренисене хатӗрлес тата турттарас ӗҫсене тума колхозри мӗнпур лашасен хисепӗнчен 30 процентӗнчен кая мар уйӑрса хумалла, ӗҫе вӗрентнӗ вӑкӑрсемпе те туллин усӑ курас пулать.

Паян вырӑнти удобренисене хатӗрлесе уя кӑлармалли уйӑх пуҫланчӗ. Партипе совет тата комсомол организацийӗсен задачи—ҫак уйӑхлӑха кашни колхоза активлӑн хутшӑнтарасси, вырӑнти удобренисем хатӗрлес ӗҫе ӑнӑҫлӑн организацилесси тата ҫак ӗҫре социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса ярасси пулса тӑрать.

Фронтпа ҫӗршыва ытларах тырпул парассишӗн вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи виҫҫӗмӗш ҫуракине большевикла ирттермелли никӗсе туса хатӗрлер!

ГИМН ТЕКСТНЕ ПИЧЕТЛЕНӖ ОТКРЫТКӐСЕМ

ССР Союзӗн Ҫыхӑну Халӑх Комиссариачӗ «Гознака» Совет Союзӗн ҫӗнӗ гимнӗн текстне пичетлесе почта открыткисем кӑларма заказ панӑ. Гимн текстне открыткӑсен пичӗ ҫинче сулахай енне пичетлеҫҫӗ.

Ҫав открыткӑсене 5 миллион экземплярпа пичетлесе кӑлараҫҫӗ. Вӗсем ҫитес сывӑх кунсенчех пичетленсе тухаҫҫӗ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровӗнчен

ЯНВАРӖН 13-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Январӗн 13-мӗшӗнче МОЗЫРЬ хули енче арми генералӗ РОКОССОВСКИЙ командир пулса ертсе пыракан Белоруссси фрончӗн ҫарӗсем наступленне ҫаплах вӑйлатса пынӑ, тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан 40 пункта ытла тытса илнӗ, вӑл шутра ШЛИЧИ, ТУРОВИЧИ, СУХОВИЧИ, ДУДИЧИ, БУДА, ГУЛЕВИЧИ, ПЕННИЦА, МИХАЛКИ, БИБИЧИ, ТАВРИНЕВКА, КАМЕНКА, ЗИМОВИЩЕ, МОИСЕЕВКА, ПРУДОК, НАГОРНОЕ ятлӑ пысӑк ялсем тата ЮШКИ, ГОЛЕВИЦЫ, МЫТВА, МИХАЛКИ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем. Пирӗн ҫарсем Белоруссии ССР-ӗн область центрӗ пулса тӑракан МОЗЫРЬ хули патне тата КАЛИНКОВИЧИ хулипе пысӑк чугун ҫул узелӗ патне таччӑнах пырса ҫитнӗ.

САРНЫ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, темиҫе ял тата ТУТОВИЧИ, ГРАФСКИЙ КУРЕНЬ, МАЛЫНЬСК ятлӑ чугун ҫул станцийӗсене тытса илнӗ. САРНЫ хулишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пирӗн ҫарсем ҫакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем—38, минометсем—53, пулеметсем—140, автомашинӑсем—193, вӑрҫӑ хатӗрӗсем тиенӗ лавсем—420, лашасем—800, хӗҫпӑшалпа боеприпас тата апат-ҫимӗҫ склачӗсем—6.

НОВОГРАД-ВОЛЫНСКИЙ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, Ровно облаҫӗнчи район центрне КОРЕЦ хулине, Каменец-Подольск облаҫӗнчи БЕРЕЗДОВ район центрне тытса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 60 пункта ытла йышӑнса илнӗ, вӑл шутра МЕДВЕДОВКА, БОЛЬШАЯ СОЛНА, ЖЕЛЕЗНИЦЕ, ДАНИЧУВ, ГОЛОВНИЦА, БРЫКОВ, ПОДДУБЦЫ, КИЛИКИЕВ, МУХАРЕВ, КУТКИ, КРАСНОСТАВ, МАНЯТИН, ЯБЛОНОВКА, СЕНИГОВ, ГОРОДИЕВКА, КУПИНО ятлӑ пысӑк ялсем тата МАЙДАН-ВИЛА ятлӑ чугун ҫул станцийӗ.

БЕРДИЧЕВ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшманпа ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, темиҫе ял тытса илнӗ.

ВИННИЦА хулинчен хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйӗсен контратакисене сире-сире янӑ.

КИРОВОГРАД хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка тунӑ, тӑшмана хирӗҫ артиллерипе минометсенчен персе тӑнӑ тата чылай пунктсенче вырӑнти ҫапӑҫусем пулса пынӑ.

Январӗн 12-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 87 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 102 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆

Мозырь хули енче пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Мозырьпе Калинковичи районне пысӑк вырӑна хурса, нимӗҫсем кунта хӑватлӑ оборона туса хатӗрленӗ, пемелли вӑрҫӑ хатӗрӗсем тем чухлех лартса тултарнӑ. Пӗр анӑҫӑр участокра тӑшман 200 яхӑн хир туппипе танксене пемелли тупӑсем, тем чухлӗ миномет, темиҫе ҫӗр пулемет пухса лартнӑ. Оборонӑн малти линийӗ хыҫӗнче нимӗҫсем тӗреклӗ пунктсем туса хатӗрленӗ, вӑл пунктсене гитлеровецсем кирек хӑш енчен пырса тапӑнсан та лайӑх хӳтӗлемелле тунӑ пулнӑ. Тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пырса, пирӗн ҫарсем аякран ҫавӑрӑнса шала кӗрсе кайнӑ та, флангсенчен тата тылран пырса ҫапса гитлеровецсене йывӑр ҫухатусем кӳнӗ. Пирӗн кӑнтӑртан тапӑнса пыракан ытти чаҫсем, нимӗҫсен оборонине татнӑ та, наступление вӑйлатса пырса, Мозырь хулинчен хӗвеланӑҫнерехре ларакан Зимовище, Моисеевка, Прудок ялӗсене тытса илнӗ. Кун каҫиччен нимӗҫсенчен пӗтӗмпе 40 ял ытла тасатнӑ. Нимӗҫсен оборонине татас ӗҫре пирӗн артиллери чи паллӑ вырӑн йышӑннӑ, вӑл хӑйӗн хӑватлӑ вут-ҫулӑмӗпе тӑшман батарейисене пусарса лартнӑ. Ҫав ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 1.500 салтакӗпе офицерне ытла вӗлерсе пӗтернӗ, 11 танкпа хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппа, артиллери тата миномет батарейисене нумай пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур. Пӗр участокра совет кавалерисчӗсем, тӑшман тылне ҫӗмӗрсе кӗрсе кайнӑ та, пӗр пысӑк ялти нимӗҫ гарнизонне вакласа тӑкнӑ.

* * *

Новоград-Волынский хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре совет танкисчӗсемпе пехотинецӗсем, ҫавтери хӑвӑртлӑн малалла куҫса пырса, Ровно облаҫӗнчи район центрне Корец хулине тытса илнӗ. Пирӗн ытти чаҫсем Каменец-Подольск облаҫӗнчи Березнов район центрне тата халӑх пурӑнакан ытти 60 пункта ытла йышӑнса илнӗ. Ҫав пунктсемшӗн пынӑ ҫапӑҫусенче 1000 гитлеровеца ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн ҫарсем трофейӑсем нумай тытса илнӗ, вӑл шутра 5 танк, 16 тупӑ, 127 пулемет, 80 автомашина тата 5 радиостанци. Темиҫе ҫӗр нимӗҫе тыткӑна илнӗ.

* * *

Винница хулинчен хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах тӑшман танкӗсемпе пехотин пысӑк вӑйӗсемпе ҫапӑҫнӑ. Тӗрлӗ участоксенче нимӗҫсем темиҫе хутчен те хаяр контратакӑсем тунӑ, вӗсем совет чаҫӗсен ҫапӑҫури речӗсем урлӑ татса кӗме хӑтланнӑ. Ҫапӑҫусем ҫав тери хаярланса кайнӑ. Хӑшпӗр ялсем темиҫе хутчен алран алла куҫнӑ. Тӑшман йывӑр ҫухатусем тӳснӗ, анчах та пӗр ҫитӗнӳ те тӑвайман. Ӑста маневрсем туса, совет пехотинецӗсем, артиллеристсемпе танкистсем тӑшмана хӑйне хирӗҫ пыра-пыра ҫапнӑ, 2000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла вӗлерсе пӗтернӗ. Тӑшманӑн 59 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине ҫунтарса янӑ. Пӗр районра пирӗн ҫарсем нимӗҫсен горно-стрелковӑй полкне ҫавӑрса илсе пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче гитлеровецсен 1.000 виллине яхӑн выртса юлнӑ. Нимӗҫсене тыткӑна нумай илнӗ тата хӗҫпашал нумай тытса илнӗ.

* * *

Кировоград хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшманпа ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ. Пӗр районра нимӗҫ пехоти, танксем пулӑшнипе, ӗнер ҫухатнӑ пысӑк яла каялла туртса илме хӑтланса, пилӗк хутчен контратакӑна кӗре-кӗре кайнӑ. Ҫав контратакӑсене пурне те, гитлеровецсене пысӑк ҫухатусем кӳрсе, сирсе янӑ. Нимӗҫсен 13 танкне персе ҫӗмӗрнӗ тата 400 салтакпа офицера яхӑн пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра совет чаҫӗсем чугун ҫул станцине вӗркӗнсе кӗрсе кайнӑ та халь ӑна тӑшмантан тасатаҫҫӗ. Трофейӑсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Пӗр пите кирлӗ шоссе ҫулӗ районӗнче кӗрешекен молдаван партизанӗсем тӑшманӑн 9 танкне тата 60 автомашинине ҫунтарса янӑ. Автомашинӑсем минӑсем ҫине кӗрсе кайнипе сирпӗне-сирпӗне кайнӑ чухне тата пӑшалпа пулеметсен вучӗпе 200 гитлеровеца ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсен 22 салтакне тыткӑна илнӗ. Тепӗр районра молдаван партизанӗсен отрячӗ тӑшман аэродромне таланнӑ. Партизансем аэродрома хуралласа тӑракансене вӗлернӗ те нимӗҫсен 10 самолетне, 20 тонна бензин, хирти 2 телефон станцине ҫунтарса янӑ тата авиабомба складне сирпӗнтерсе янӑ.

* * *

Финсен пехотнӑй бригадин 3-мӗш батальонри 10-мӗш ротӑран тыткӑна лекнӗ салтак Лаури Тойвонвирта ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Мана ҫара 1941 ҫулти июнӗн 18-мӗшӗнче илчӗҫ. Ҫав вӑхӑтран пуҫласа эпӗ пӗрмаях тенӗ пекех фронтра пурӑнатӑп. Мӗншӗн ҫапӑҫнӑ-ха эпӗ ҫак вӑхӑт хушшинче? Ҫак вӑрҫӑ мӗншӗн пынине ӑнлантарса парса, пирӗн хаҫатсем: эпир «аслӑ Финлянди» тӑвассишӗн вӑрҫатпӑр, тесе ҫырчӗҫ. Вӑрҫӑ пуҫламӗшӗнче эпӗ, ыттисем пекех, ҫак вӑрҫӑ хыҫҫӑн Карелия, Мурманск крайӗ тата Ленинград Финлянди территорине кӗрӗҫ, тесе ӗненсе тӑраттӑмчӗ. Ун ҫинчен пур ҫӗрте те уҫҫӑнах калаҫатчӗҫ. Вӑрҫӑ вӑрӑма тӑсӑлса кайрӗ те телей вырӑссем майлӑ ҫаврӑнса ӳкрӗ. Халӗ ӗнтӗ пурте кураҫҫӗ: Германин, алла пулсан Финляндин те, ку вӑрҫӑра кӗретӗнех аяла пулса юлмалла пулать. «Аслӑ Финлянди» планӗсем пирки шавлани пӗтсе ларчӗ. Хаҫатсем тата правительство ҫыннисем халӗ ӗнтӗ Финлянди ку вӑрҫа хӑйне хӳтӗлес тесе хутшӑнчӗ теме пуҫларӗҫ. Анчах та офицерсем урӑхла шутлаҫҫӗ. Нумаях пулмасть, 3-мӗш батальон командирӗ Иконен майор пирӗнпе калаҫу туса ирттерчӗ. Вӑл пире Финляндин вӑрҫӑ хыҫҫӑн пулас карттине кӑтартса ӑнлантарчӗ. Ҫав карттӑ тӑрӑх, пӗтӗм Карели, Ленинград, Мурманск тата Мурманск чугун ҫулӗ Финлянди территоринче тӑраҫҫӗ. Вӑл пире нимӗҫсенчен вӗренме сӗнчӗ. Вӑл ҫапла каларӗ: «Нимӗҫсем аслӑ Германишӗн вӑрҫаҫҫӗ, пирӗн вӗсемпе пӗрле «аслӑ Финляндишӗн» вӑрҫас пулать. Анчах та ҫакӑ вӑл пуш параппана ҫапни кӑна. Халӗ ӗнтӗ тӑм-пуҫ шюцкоровецсем те ҫакна ӑнланса илме пуҫларӗҫ: Российӑпа вӑрҫни авантюра кӑна вӑл, ырӑпа пӗтмелли япала мар. Ҫав авантюрӑшӑн Финляндин йывӑр ответ тытма лекет-ха».

Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне хамӑр алӑрах хӑваратпӑр

Пирӗн завод коллективӗ 1943 ҫулхи производство планне 34 кун малтан пурнӑҫларӗ. Донбасс валли хатӗрлемелли заказсене те срокчен пурнӑҫа кӗртрӗ. 1943 ҫулта 1942 ҫулхинчен икӗ хута яхӑн ытларах продукци туса кӑларнӑ.

1944 ҫулта завод коллективӗ ҫӗнӗ вӑй-хӑватпа ӗҫлеме тытӑнчӗ. Кашни рабочипе работница Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне малашне те заводрах хӑварассишӗн вӑхӑта шута илмесӗр ӗҫлеҫҫӗ. Кашнийех ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартса пырать. Паллӑ фрезеровщик Н. Королев юлташ иртнӗ ҫулта ӗҫ нормине 300 процент тултарнӑ пулсан, кӑҫал вӑл задание куллен 500-шер процент тултарса пыма обязательство илнӗ. Ҫамрӑк слесарь Ю. Андреева юлташ, ку заводра ҫулталӑк кӑна ӗҫлет пулин те, ӗҫ нормине 300 процент тултарса пырать.

Механически тата инструментальнӑй цехсем иртнӗ ҫулта чи малта пынӑ. Кинсбургский юлташ начальник пулса ӗҫлекен цех коллективӗ ҫичӗ уйӑх ӗнтӗ заводӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне хӑйӗн аллинче тытса тӑрать.

Заводра поточнӑй меслетпе ӗҫлесси сарӑлчӗ. Сборочнӑй цех изделисене кӑларассине конвеерпа туса пырать. Мухаметов, Петров, Москвина, Собачева, Интриллигатор юлташсем ҫӗнӗ ҫулӑн виҫҫӗмӗш кунӗнчех ҫӗнӗ вӑй-хӑватпа ӗҫлени курӑнчӗ. Вӗсем задание 300 процент ытла тултараҫҫӗ.

Сталин юлташ ҫӗнтерӳ сехетне ҫывхартассишӗн тылра ӗҫлекенсене татах та патварлӑрах ӗҫлеме чӗннине асра тытса, рабочисемпе работницӑсем куллен-кун ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тӑвассишӗн социализмлӑ ӑмӑртӑва вӑйлӑн сарса пыраҫҫӗ.

А. ЯКУНИН,
Н-ски заводӑн главнӑй инженерӗ.

Икӗ хут ытларах продукци туса парассишӗн

Иртнӗ ҫулта «Кооператор» артель ҫулталӑкри планран ирттерсе 34 пин тенкӗлӗх продукци туса кӑларчӗ. Химически цех тата йывӑҫран тӗрлӗрен япаласем тӑвакан цех уйрӑмах аван ӗҫлерӗҫ. Ҫамрӑк рабочисем Деменев, Зверев юлташсем кашни уйӑхра задание 200 процент тултарса ӗҫлерӗҫ. Ҫавӑн пекех Рыбаков, Пластинин юлташсем те задание 150—200 процент таран тултарса пычӗҫ.

Артель коллективӗ халӗ январь уйӑхӗнчи задание срокчен пурнӑҫлассишӗн «Кожупряжь» артельпе ӑмӑртса ӗҫлет. Кашни рабочипе работница ӗҫ нормине икӗ хут ирттерсе тултарма пулчӗҫ.

Артель кӑҫал иртнӗ ҫулхинчен икӗ хут ытларах продукци парассишӗн кӗрешет.

И. КОЛБАСОВ,
Шупашкарти «Кооператор» артель председателӗ.

Республикӑри МТС-сем 1944-мӗш ҫулхи январӗн 10-мӗшӗ тӗлне тракторсем юсамалли плана мӗн чухлӗ тултарнине кӑтартакан СВОДКА

МТС-сем	Пурӗ тӗпрен юсанӑ тата текущи ремонт тунӑ (процентпа).	Ҫав шутра январь уйӑхӗнчи плана тултарнӑ (процентпа)
Красноармейски	100,0	250,0
Комсомольски	80,0	—
Шупашкар	71,7	125,0
Йӗпреҫ	60,0	—
Ишлей	57,6	27,2
Сӗнтӗр	55,3	50,0
Канаш	52,8	53,8
Вӑрнар	52,8	—
Шӑхасан	50,0	22,2
Ҫӗрпӳ	45,7	30,0
Елчӗк	44,2	27,3
Сӗнтӗрвӑрри	44,0	33,3
Хӗрлӗ Чутай	43,4	—
Элӗк	43,1	12,5
Чкаловски	40,3	40,0
Тӑвай	40,0	—
Шӑмӑршӑ	38,8	—
Етӗрне	38,4	28,5
Ҫӗмӗрле	38,4	—
Куславкка	36,9	10,0
Вӑрмар	36,1	—
Пӑрачкав	31,3	30,0
Первомайски	28,0	66,6
Улатӑр	26,7	18,7
Кувакино	26,3	6,6
Республикине пӗтӗмпе:	45,6	31,7
Январӗн 5-мӗшӗ тӗлне пулнӑ	43,7	21,0

* * *

Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса хӑй ҫине илнӗ обязательствӑсене большевикла пурнӑҫласа пырса, Красноармейски МТС-ӗ январӗн 1-мӗшӗ тӗлне 20 трактора пӗтӗмпех юсаса кварталти плана 200 процент тултарнӑ, ҫав вӑхӑтрах тракторсем ҫумне кӳлсе ҫӳремелли инвентарсене йӗркене кӗртнӗ тата 16 комбайн моторӗнчен 6-шне юсанӑ. Ҫавӑн пекех Комсомольски, Шупашкар, Йӗпреҫ, Ишлей, Сӗнтӗр тата ытти хӑшпӗр МТС-сенче те тракторсене юсас ӗҫ лайӑх пулса пырать.

Шӑхасан МТС-ӗн коллективӗ паянхи куна тракторсемпе машинӑсене пӗтӗмпе 85 процент чухлӗ ытла юсанӑ. Ку ӗҫре МТС-ӑн старший механикӗ Северов юлташ питех те тӑрӑшать. Вӑл ултӑ уйӑх хушшинче кивӗ пайсене 13.400 тенкӗлӗх ҫӗнетсе юсанӑ. Тракторсемпе ытти машинӑсене мӗнле пахалӑхпа юсанине тракторсем юсас ӗҫӗн мастерӗ К. Петров юлташ тӗрӗслесе тӑрать.

Январӗн 10-мӗшӗ тӗлне тракторсене юсас енӗпе Кувакино, Улатӑр, Первомайски, Пӑрачкав тата ытти хӑшпӗр районсем ҫаплипех юлса пыраҫҫӗ-ха.

Ҫак кунсенче пулса иртнӗ ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн XVII пленумӗ ҫак районсенче тракторсене юсас ӗҫ ҫулран-ҫулах юлса пынине палӑртса, ЧАССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатне вӗсен ӗҫне уйрӑмах контрольлесе пыма хушрӗ. Тракторсене пахалӑхсӑр юсанин тӗслӗхӗсем пуррине палӑртса, пленум Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатне, райисполкомсемпе ВКП(б) райкомӗсене тракторсене юсас ӗҫӗн пахалӑхӗ мӗнле пулса пынине кашни 10 кун хыҫҫӑнах тӗрӗслесе тӑма хушрӗ.

МТС-сенчи рабочисемпе служащисем хушшинче массӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫе анлӑн сарса ямалла, МТС-сен бригадисенче тата рабочисен пӗр-пӗрин хушшинче социализмлӑ ӑмӑртӑва вӑйлӑн сарса пымалла, кашни МТС-рах тракторсене юсас ӗҫ мӗнле пынине кӑтартакан хӑмасем тумалла.

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн пленумӗ МТС-семпе совхозсенчи трактористсене, трактористкӑсене тата пур работниксене те вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи виҫҫӗмӗш ҫураки валли машинӑсемпе тракторсен паркне тӗплӗн юсаса хатӗрлессишӗн, тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисене юсас ӗҫе срокчен вӗҫлесе Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илессишӗн Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнма чӗнчӗ.

МТС-сенчи трактористсемпе трактористкӑсене, инженерла-техникла рабочисемпе мӗнпур служащисене ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн XVII пленумӗ «Тракорсене юсасси мӗнле пыни ҫинчен» йышӑннӑ решенине тата Горьки облаҫӗнчи Каменка МТС-ӗн коллективӗ чӗнсе каланине тӗплӗн ӑнлантармалла, ҫапла вара МТС-сенче машинӑсемпе тракторсен паркне юсас ӗҫе тӗпрен хӑвӑртлатмалла.

Украинӑра хаҫатсен хисепӗ ӳсет

Украинӑн тӑшманран ирӗке кӑларнӑ территорийӗнче облаҫсемпе районсенчи хаҫатсен хисепӗ ӳссе пырать. Украина ССР-ӗн республика хаҫачӗсем те нумайланса пыраҫҫӗ. Харьковра вырӑс чӗлхипе «Сталинское племя» (республикӑри ҫамрӑксем валли) тата «Юный ленинец» (ачасем валли) хаҫатсем тухма пуҫланӑ. (ТАСС).

Ҫуракине большевикла хатӗрлер

Мӑнтӑр та сывӑ лашасемшӗн

Матти Пайтиккассинчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз ҫуракине валли вӑрлӑх ҫителӗклӗ хатӗрленӗ. Вӑл пӗтӗмпех сортласа тасатнӑ, шӑтас пахалӑхӗ 98—99 процент шутланать.

Колхозӑн ӗҫ лашисем 40. Вӗсенчен ӗҫе юрӑхсӑррисем 3 лаша. Вӗсене халь уйрӑммӑн лайӑх пӑхаҫҫӗ, вӑйлӑрах апат ҫиме тӑратаҫҫӗ.

— Ҫурака валли кашни лашана самӑр тӑвассишӗн конюхсем хушшинче социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса ятӑмӑр. Лашасене куллен мӗнле пӑхнине тӗрӗслесе тӑратпӑр,— тет старши конюх С. Уваров юлташ. Кунта кашни лашана колхозниксене ҫирӗплетсе панӑ. Конюхсем хушшинче колхоз председателӗ хушнипе колхозниксем лашасене мӗнле тытнине контрольлесе тӑраҫҫӗ.

Колхозра Клавдия Иванова пӑхакан лашасем уйрӑммӑн самӑр та тӗреклӗ. Вӑл пурӗ 11 лаша пӑхать. Хӑйӗн ӗҫне юратса тӑвать, вӑхӑтра апат парать, шӑварать, уҫӑлтарма ҫӳретет, кӑна та лашасене нормӑна ҫитерет.

Вӑл 1936 ҫултанпа пӗр улшӑнмасӑр колхоза ӗҫлет ӗнтӗ. Ҫав вӑхӑт хушшинче унӑн пӑхакан кӗсрисенчен 16 тиха илнӗ, начарланса тӗрлӗ сахалтан пӗр лаша та вилмен.

Ивановӑн лайӑх ӗҫ опычӗне ытти конюхсем те анлӑн усӑ кураҫҫӗ.

Александра Яковлева та конюхра ӗҫлет. Вӑл пӑхакан лашасем те начар мар.

Лашасене тӗрӗс пӑхас, ҫамрӑк тихасене тӗрӗс-тӗкӗл пӑхса ҫитӗнтерес тӗлӗшпе старши конюх С. Уваровпа колхозри ветсанитар И. Степанов тимлӗн ӗҫлеҫҫӗ.

Вӑрҫа пула, колхозра туртӑм вӑйӗ чылай чакнӑ. Ҫавӑнпа кастарнӑ вӑкӑрсене ӗҫе вӗрентеҫҫӗ. Паянхи куна 3 вӑкӑра кӳлсе ҫӳреме вӗрентнӗ. Халь вӗсемпе ук тислӗк кӑларассӗ, фермӑри вылӑхсен валли апат турттараҫҫӗ.

Кунта лаша кӳлмелли хатӗрсене ҫителӗклӗ юсаса хунӑ. Ҫуракине хатӗрленнӗ май, 8 урапа юсаса хатӗрленӗ. Ҫӗнӗрен 25 хӑмат, 19 ӗнерӗ тунӑ. Колхоз председателӗ — отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ инвалиде И. Миронов мӗнпур ӗҫе фронтри пек туса пыма тӑрӑшать.

Анчах пур колхозсене те лашасене тивӗҫлипе пӑхмаҫҫӗ-ха. Сталин ячӗпе тӑракан колхозпа юнашарах «Молодой колхозник» колхоз пур. Унта лашасене пӑхас тӗлӗшпе пачах ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ.

— Лашасене айӑпла мар кунта, эпир хамӑр айӑпла. Нумаях пулмасть—Анастасия Иванова ирӗк-кун кӳлсе кайрӗ те тепӗр кунне каҫхине ҫеҫ таврӑнчӗ. Талӑк ҫурӑ лашана йӗркеллӗ ҫитермен, шӑварман. Ҫавӑн пекех район работникӗ Иванова юлташ кашни лашине кӳлсе кайса ҫӳренӗ, кунне тин каялла таврӑннӑ.

Ку сӑмахсене старши конюх — Андрей Григорьевич калать. «Молодой колхозник» колхозра лашасем хисепре мар. Лашасене час-часах ытлашши хӑвалаҫҫӗ, хӗснесе сурпаланнӑ. 1943 ҫулта 20 кӗсрене хӑм пӑрахтарнӑ.

Кунта транспорт инвентарӗсем юсавсӑр, ҫитмеҫҫӗ.

Кайри Антавшри Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозра, туртӑм вӑйӗ ҫитеӗксӗррине курса, 4 вӑкӑра кӳлсе ҫӳреме вӗрентнӗ, анчах та вӗсене халь пӗтӗмлех какайшӑн «заготскота» леҫсе панӑ.

Туртӑм вӑйӗ ҫине «Молодой колхозник» тата Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозсенчи пек пӑхмалла мар. Туртӑм вӑйӗ—ҫураки ӑнӑҫлӑхне татса парать.

В. ВЕСЕЛОВ,

ШАХАСАН. (Хамӑр корр.)

Икӗ колхоз—икӗ тӗрлӗ ӗҫ

ШАМАРША. Анат Чатӑкас ялсоветӗнчи уйрӑм колхозсем ҫуракине тимлӗн хатӗрленеҫҫӗ.

Максим Горький ячӗпе тӑракан колхозра (председателӗ А. Николаев юлташ) уйхире тислӗк турттарас, юр тытас, вӑрлӑх сортлас тата вӗсен пахалӑхне тӗрӗслес ӗҫсене пӗтӗмпех туса ҫитернӗ, плугсемпе сӳресене, урапасемпе машинӑсене тата ут тасрашӗсене ҫителӗклӗ таран юсаса хунӑ.

Колхозра партин пуҫламӑш организацийӗ ҫук. Нумаях пулмасть комсомолӑн пуҫламӑш организацине йӗркелерӗҫ. Комсомолецсем ҫуракине хатӗрленес ӗҫре колхозниксене лайӑх ертсе пыраҫҫӗ. Комсомол организацийӗ пуҫарнипе ҫак кунсенче кӑна уя 100 лав тислӗк кӑларнӑ тата 50 гектар ҫинче юр тытнӑ.

Колхозниксемпе колхозницӑсем халӗ агротехникӑна вӗренеҫҫӗ, ҫураки планне сӳтсе-яваҫҫӗ, мӗнле тырӑсене хӑш пусса акмаллине палӑртаҫҫӗ.

Ҫак колхозпа кӳршӗри, пӗр ялсоветне кӗрекен Сталин ячӗпе тӑракан колхозра ҫуракине хатӗрленес ӗҫсем сӳрӗк пулса пыраҫҫӗ. Кунта вӑрлӑхсем ҫителӗксӗр, вӗсене сортласа хуман, плугсемпе сӳресене тата ытти машинӑсене юсама тытӑнман. Ут таврашӗсем—сӑмсисем, тилхепесем тата ыттисем ҫителӗксӗр, анчах вӗсене хатӗрлес енӗпе нимӗн те тумаҫҫӗ. Юр тытасси асра та ҫук.

Сталин ячӗпе тӑракан колхозӑн иртнӗ ҫул тырпул тухӑҫсӑр пулчӗ. Иртнӗ ҫулхи йӑнӑшсене кӑҫал та тӑваҫҫӗ. Ҫуракине хатӗрленес ӗҫе вӑраха тӑсни вӑл ҫурхи ӗҫсенче чӑрмантарать. Ҫакна хӑҫан ӑнланса илеҫҫӗ-ши Сталин ячӗпе тӑракан колхозӑн руководителӗсем?

П. АЛЕКСЕЕВ.

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Активпа таччӑн ҫыхӑнса ӗҫленӗ ҫӗрте

Иҫлей районӗнчи «Клевер» колхозри пуҫламӑш парторганизаци (секретарӗ П. Печников юлташ) ялти активпа таччӑн ҫыхӑнса ӗҫлет. Активистсене уйрӑм ӗҫсем хушса, вӗсене пурнӑҫа кӗртме пулӑшать. Унта партире тӑман ҫынсене те Сталин юлташӑн «Совет Союзӗн Отечественнӑй аслӑ вӑрҫи ҫинчен» ҫырнӑ кӗнекине вӗренес ӗҫе явӑҫтарнӑ.

Ялти актив пур ӗҫе те тимлӗн туса пырать. Морев юлташ фронтран аманса таврӑннӑ хыҫҫӑнах ферма заведующийӗ пулса ӗҫлеме тытӑнчӗ. Ҫулталӑк хушшинче вӑл ферма ӗҫне тӗпренех лайӑхлатрӗ. Вӑл ӗҫлеме тытӑначчен ферма государствӑна сӗт-ҫу, аш-какай, ҫӑмарта тата ҫӑм памалли плансене ҫулран ҫулах тултарайман. Халӗ ферма государство умӗнчи хӑйӗн тивӗҫлӗхне чыслӑн пурнӑҫлать. Государствӑна 1944 ҫулшӑн аш-какай памалли плана иртнӗ ҫултах пурнӑҫланӑ. Ферма ҫурчӗсене юсаса ӑшӑтнӑ. Выльӑх апачӗсем ҫителӗклӗ хатӗрленӗ. Морев юлташ ферма работникӗсем хушшинче час-часах калаҫусем ирттерет, вӗсене хаҫатсем вуласа парать, тӗнчери лару-тӑрусем ҫинчен каласа парать.

Мария Коганова колхозра бригадир пулса ӗҫлет. Вӑл фронтовик арӑмӗ. Унӑн бригади ялхуҫалӑх ӗҫӗсене ҫулсеренех кӗске вӑхӑтра вӗҫлет. Халӗ колхозниксем кӑҫал татах та вӑйлӑрах тырпул туса илессишӗн мӗнпур вӑя хурса ӗҫлеҫҫӗ. 25 гектар ҫинче юр тытнӑ, 15 центнер кӗл, 5 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ шухнӑ, уя 200 лав тислӗк кӑларнӑ. Колхоз, пӗтӗмӗшпе илсен те, ҫуракине ӑнӑҫлӑн хатӗрленет.

В. ГУСЬКОВ.

Хаҫат-журналсемпе тӗрӗс усӑ курмалла

Вырӑнти парторганизацисен хисеплӗ ӗҫӗ — хаҫат-журналсемпе тӗрӗс те кирлӗ пек усӑ курасси пулать. Вӗсен кашни хаҫата, журнала вулакансем патне вӑхӑтра ҫитерме, вӗсемпе тӗрӗс усӑ курмалла тумалла. Элӗк районӗнче ҫавӑн пек мар вара. Чылай чухне хаҫатсене подписчиксем патне вӑхӑтра ҫитермеҫҫӗ.

Райсовет исполкомне республикӑри хаҫатсем кӑна мар, центрта тухакан хаҫатсем те чылай килеҫҫӗ. Елӗкрех кунта хаҫат витрини пурччӗ, унта кашни кун тенӗ пекех «Известия» хаҫат пулатчӗ. Ун чухне витрина умӗнче яланах халӑх чылай тӑнине курма пулатчӗ.

Анчах... ҫур ҫул ытла ӗнтӗ унта хаҫат пырса ҫакманни. Пуҫламӑш парторганизаци те, местком та витрина ҫинчен пачах манса кайнӑ.

МТС коллективӗ, уйрӑм подписчиксемсӗр пуҫне, «Правда», «Комсомольская Правда», «Чӑваш Коммуни», «Красная Чувашия» тата районри «Колхоз хаҫачӗ» хаҫатсене илет. Анчах чылай чухне вӗсем трактористсем патне ҫитмеҫҫӗ, ҫитменне тата витрина ҫинче те хаҫат пулмасть.

Госбанкра, перекет кассинче, больницӑра, «Коммунар» промартельте тата ытти хӑшпӗр учрежденисенче те хаҫат витринисем организацилемен.

Ялсоветсемпе колхозсенче те хаҫатсемпе тӗрӗс усӑ курмаҫҫӗ, витринӑсем ҫук. Тавӑтри «Сталинит» колхоз (председателӗ Петров), Сормпуҫ Мучикассинчи «Хӗрлӗ ялав» колхоз (председателӗ Игнатьев) хаҫатсене илсенех чӗлӗм турттараҫҫӗ. Ехремкассинчи «1-мӗш мая», Куракӑшри «Безбожник», Юманлӑхри Буденный ячӗпе тӑракан тата ытти чылай колхозсенче ҫӗкӗ хаҫатсене ҫӗлесе пымаҫҫӗ. Ҫавна пула вара колхозниксем хаҫат вуламасӑрах юлаҫҫӗ.

Районра 25 вулав ҫурчӗ пур. Вӗсенче ҫуррине те хаҫат витринисем ҫук.

— Витрина организацилесен те пурпӗрех хаҫата пурте вулама пултараймӗҫ,—тет Элӗк ялсоветӗнчи вулав ҫурчӗн заведующийӗ Константинова юлташ.

Ҫапла шухӑшланӑрах ӗнтӗ вӑл вулав ҫурчӗн ӗҫне юлашки вӑхӑтра йӑлтах япӑхтарса ячӗ. Халь унта ҫӳрекенсем ҫукпа пӗрех, пырсан та вӗсем валли нимӗн те ҫук, хаҫатсене ӗҫ вӑхӑчӗ пӗтнӗ-пӗтменех ялсовет исполкомӗн секретарӗ шкафа питӗрсе хурать.

ВКП(б) райкомӗн работникӗсем ялсенче те, колхозсенче те час-часах пулаҫҫӗ, анчах хаҫатсемпе усӑ курас ыйтупа интересленмеҫҫӗ. «Чӑваш Коммуни» тата «Красная Чувашия» хаҫатсен декабрӗн 7—8-мӗшӗсенче тухнӑ номерӗсем районра пӗтӗмпех ҫухалнӑ. Ун пирки райком нимӗн те туман.

Сӑмах майӗн радио ҫинчен те каламалла. Чылай чухне радио тӑрӑх пани япӑх илтӗнет е тата кирлӗ хыпарсем панӑ вӑхӑтрах радио чарӑнса ларать. Шупашкартан радио тӑрӑх панисене пур чухне те мар йышӑнаҫҫӗ. Кусемсӗр пуҫне тата юлашки вӑхӑтра вырӑнти вещани ӗҫӗ пачах сӳнсе ларчӗ, пӗр уйӑх ӗнтӗ нимӗнле передача та пулман.

Х. ЛИСИН.
(Хамӑр корр.).

Сталин юлташӑн кӗнекине вӗренеҫҫӗ

ШАМАРША, Районри комсомолецсем Сталин юлташӑн «Совет Союзӗн Отечественнӑй аслӑ вӑрҫи ҫинчен» ятлӑ кӗнекине кружоксене ҫӳресе вӗренеҫҫӗ. Ку тӗлӗшпе районра 33 кружок организациленӗ. Вӗсенче 710 комсомолец вӗренет. 10 кружокра Сталин юлташӑн кӗнекине вӗренсе пӗтернӗ ӗнтӗ. Ытти кружоксем те йӗркеллӗ ӗҫлесе пыраҫҫӗ. Халиччен вӗсем 4—5-шер занятти ирттернӗ.

А. МАТВЕЕВА.

Вилӗмсӗр гвардеец

Хуйӑха аршӑнпа виҫме ҫук, куҫҫуль тумламӗсене те шута илме ҫук, хурлӑха та таваса сине хурса тайтарма ҫук.

(ИЛЬЯ ЭРЕНБУРГ).

Ҫуркунне. Хӗвел хӗртсе пӑхнӑ, юр ирӗлнӗ. Анчах... иҫетре-инҫетре, Чӑваш ҫӗршывӗнчен темиҫе пин ҫухрӑмра, хаяр та юнлӑ вӑрҫӑ кӗрленӗ. Нимӗҫсем пирӗн телейлӗхе, ирӗклӗхе, пуянлӑха туртса илесшӗн хыпса ҫуннӑ.

...Ывӑлӗ вилни ҫинчен килнӗ хыпара ватӑ амӑшӗ вӗри куҫҫулӗпе кӗтсе илнӗ. Ашшӗ вара кӑмӑлне хытарнӑ, вӑл питҫӑмартти ҫине майӗпен юхса аннӑ куҫҫуль тумламӗсене тивӗтсе, чылайччен чӗнмесӗр ларнӑ. Пывӑр пулнӑ ватӑсене. Ывӑлӗ Тӑван ҫӗршывшӑн геройла ҫапӑҫса вилнӗ.

— Ҫӗршывшӑн ҫапӑҫса вилнӗ, карчӑкӑм, кӑмӑлна хытар. Ана куҫҫулӗ чӗртеймӗ, ҫитӗ макӑрма,—лӑплантарнӑ старик.

Ҫак сӑмахсене вӑл темле хытӑн каласшӑн пулчӗ, анчах вӗсем шӑппӑн та хуйхӑллӑн илтӗнсе вӗҫлерӗҫ. Ҫухату йывӑр: Прокопьевсен ҫемьинчен чи кӗҫӗн ывӑлӗ—Анатолий—каталнӑ.

* * *

1942 ҫулхи ноябрь. Анатолий Прокопьев, хӗрлӗ ҫалтӑрлӑ ытти пин-пин боецсемпе пӗрле, Сталинграда хӳтӗлеме кайнӑ.

Поезд Сталинград ҫывӑхӗнчи пӗр станцӑра чарӑннӑ. Хӗл енчелле ҫулӑннӑ пулин те, ҫанталӑк юрлӑ-ҫумӑрлӑ тӑнӑ.

Анатолий Прокопьев перрон ҫинче тӑнӑ вӑхӑтра темиҫе ҫӗр ҫухрӑм хыҫа тӑрса юлнӑ тӑван Чӑваш ҫӗршывне аса илнӗ. Унӑн куҫӗсем умне илемлӗ вӑрмансем, тем таккиш ҫаврӑнса выртакан тӑван уй-хирсем, ҫименсем, ҫывӑх тусӗсем тухса тӑнӑ. Вунтӑхӑр ҫулхи ҫамрӑкӑн чӗри, тӑван республикӑна аса илнӗ хыҫҫӑн, темшӗн тата хӗрӳрех тапма пуҫланӑ. «Чӗрем тапма пӑрахиччен тӑван ҫӗршыва хӳтӗлӗп,»—тесе ҫирӗппӗн шутланӑ вӑл.

Акӑ Сталинград. Акӑ вӑл геройхула, ҫӗнмь-хула, ватӑ Атӑлан хуҫа крепоҫӗ!

Сталинград ҫуннӑ. Хула ҫийӗнче кунӗн-ҫӗрӗн хура-тӗтӗм явӑннӑ. Урса кайнӑ нимӗҫсем, хӑйсем пысӑк ҫухатусем тӳснине пӑхмасӑр, хӑйсен салтакӗсемпе офицерӗсен виллисем урлӑ каҫа-хаҫах, малалла—Атӑл хӗрне тухма тапаҫланнӑ.

Прокопьев тӑракан часть хулан кӑнтӑр пайӗнче, тӑшман ишӗлтернӗ темиҫе хутлӑ ҫуртсем хушшинче, позици йышӑннӑ. Ҫав чаҫра Тӑван ҫӗршыв чысӗпе ирӗклӗхне хӳтӗлеме тӗрлӗ ҫӗртен килнӗ тӑванлӑ халӑхсем — вырӑссем, удмуртсем, тутарсем, грузинсем тата ыттисем те пулнӑ.

Паттӑр Анатолие тусӗсем чӗререн юратнӑ. Ҫапӑҫу хӗрсе пынӑ вӑхӑтсенче вӑл тусӗсене хӑйӗн икӗ пиччӗшӗ — Сергейпе Владимир — фронтра паттӑррӑн ҫапӑҫни ҫинчен каласа кӑтартнӑ. Унӑн пиччӗшӗ—гвардеец Сергей Прокопьев ертсе пыракан эскадрон, тӑшман тылне ҫӗмӗрӗ-ҫӗмӗрӗ кӗрсе, паттӑрла ӗҫсем тунӑ, ҫавӑншӑн орден панӑ. «Вӗсене те ҫапӑҫусенче ҫӑмӑл пулман, тӑван пиччӗсем вӑл йывӑрлӑхсене ҫӗнтернӗ. Йывӑр вӑхӑтсем килсен, эпӗ яланах вӗсене аса илетӗп». — тенӗ час-часах Анатолий.

* * *

Ҫитнӗ ноябрӗн 19-мӗшӗ—мухтавлӑ кун. Хӗрлӗ Ҫарӑн геройла полкӗсем ҫурҫӗрпе хӗвеланӑҫ енчен наступлени пуҫласа янӑ. Легендарлӑ 62-мӗш Ҫар кунта нимӗҫсене вӗри ҫатма ҫинче тӑрса ӑшаланӑ пекех ҫунтарнӑ.

Шартлама сивӗ хӗл ҫитнӗ. Мухтавлӑ хӗрлӗ воинсем Сталинграда тӑшманран тасатса пынӑ.

Февралӗн 3-мӗшӗнче Совет Информаци Бюровӗ питех те савӑнӑҫлӑ хыпар—Сталинград патӗнче ҫапӑҫса илнӗ нимӗҫ ҫарӗсене пӗтерсе тӑкас ӗҫе вӗҫлени ҫинчен пӗлтернӗ. Ҫав ҫапӑҫусенче пирӗн паттӑр земляк Анатолий Прокопьев та геройла ҫапӑҫнӑ.

...Сталинградшӑн юлашки ҫапӑҫусем пынӑ. Анатолий Прокопьевсен подразделенийӗ хамӑрӑн тепӗр чаҫпа пӗрлешмелле пулнӑ. Анчах та умра, ҫак икӗ чаҫа уйӑрса, чул ҫурт ларнӑ. Ҫав ҫуртра—нимӗҫсем, ҫурт — нимӗҫсен дочӗ. Сехре хӑпнӑ фрицсем ҫав дотран наступлени тӑвакан пирӗн чаҫсем ҫине тӑхлан ҫумӑрӗ ҫутарнӑ.

— Пулӑшу кӗтме вӑхӑт ҫук. Дота штурмласа илмелле,—приказ панӑ командир. Анчах тӑхлан ҫумӑрӗ пирӗн пехотинецсен наступленине вӑхӑтлӑха чарса лартнӑ.

— Мана ирӗк парӑр, — илтӗннӗ сасартӑк боецсем хушшинчен пӗр уҫӑ сасӑ. Ана боецсем чылайӗшӗ илтнӗ. Вӑл — Анатолий Прокопьев пулнӑ.

Нумай та вӑхӑт иртмен, пирӗн земляк гранатӑсем илсе ҫурт патнелле шума тытӑннӑ. Икӗ хутчен кайса гранатӑсене ывӑтса хӑварнӑ вӑл, каллех каялла шуса килнӗ. Ҫамки ҫине тапса тухнӑ шултӑра тар пӗрчисене шӑлса илнӗ те Анатолий, хӑйӗн паттӑр юлташӗсем ҫине пӑхса ҫаврӑннӑ.

— Акӑ вӑл пехота, темле вӑя та ҫапса ҫӗмӗрме пултараканскер,—тенӗ. Унӑн чӗри хӑварт-хӑварт тапнӑ. Чӗри ҫумӗнче, тарпа йӗпеннӗ гимнастерка кӑсъинче—комсомол билечӗ, унпа юнашар—Донпа Украина ҫеҫенхирӗсенче кӗрешсе чапа тухнӑ Сергей пиччӗшӗн сӑн-ӳкерчӗкӗ выртнӑ. Вӑл вӗсене кӑларса пӑхнӑ. Нумайччен пӑхнӑ вӑл комсомол билечӗпе пиччӗшӗн сӑн ӳкерчӗкӗ ҫине.

Ун хыҫҫӑн виҫҫӗмӗш хут упаленнӗ Анатолий тӑшман дочӗ патнелле. Ун ҫийӗн темиҫе пин пуля шӑхӑрашӑхӑра иртнӗ, анчах вӑл ҫаплах шунӑ...

Ҫапла тума чӗннӗ ӑна аслӑ совет халӑхӗ, орденлӑ Чӑваш республикин чапӗ, тӑван ял-йыш. Юлашкинчен, аслати сасси евӗр кӗмсӗртетсе, чул ҫурт ҫурӑлнӑ. Дот ҫӗмӗрӗлнӗ. Ҫав вӑхӑтра Прокопьевсен чаҫӗ «ура!» кӑшкӑрса малалла ыткӑннӑ.

* * *

Часах пирӗн мухтавлӑ ҫарсем Сталинграда нимӗҫсен фашистла захватчикӗсенчен тӗпӗ-йӗрӗпех тасатнӑ. Сталинграда геройла хӳтӗленӗ воинсене пирӗн артиллеристсем темиҫе тупӑран персе саламланӑ.

Анчах ҫав тупӑсен кӗрлевне Анатолий Прокопьев илтеймен. Юлташӗсем Анатолий вилнӗ чул ҫурта шырса тупнӑ. Унтан гитлеровецсен 30 ытла виллипе ҫӗмрӗк пулеметсем сапаланса выртнӑ, унтах пирӗн паттӑр земляк Анатолий Прокопьев куҫа хупса, чӗнмесӗр выртнӑ.

Вунтӑхӑр ҫулти герой! Кашнин пичӗ ҫинех тавӑру куҫҫулӗ шӑпӑртатса аннӑ. Каскӑсене хывса, юлташӗсем героя чысланӑ. Унтан вара снарядсемпе минӑсем, бомбӑсемпе осколоксем татса ҫуркаланӑ шӑн тӑпрана чавса, Анатолий Прокопьева тирпейлесе пытарнӑ.

Тӑпру ҫӑмӑл пултӑр, вилӗмсӗр гвардеец! Правительство ӑна вилнӗ хыҫҫӑн «Отечественнӑй вӑрҫӑн 1-мӗш степень» орденпе тата «За оборону Сталинграда» медальпе наградӑланӑ тата пӗр гвардейски чаҫӑн спискине ӗмӗрлӗхех кӗртнӗ.

Халӗ кашни тӗрӗслӳрех сылтӑм флангра тӑракан боец ҫапла ответлет:

— Гвардеец Анатолий Прокопьевич Прокопьев Тӑван ҫӗршыва паттӑррӑн хӳтӗлесе геройла вилнӗ.

А. ХАТАЕВСКИЙ.

ОКТЯБРЬСКОЕ. Хуттӑр Шӗнер.

Ют ҫӗршывсенче

ИТАЛИРИ ВАРҪА ӖҪӖСЕМ

ЛОНДОН, январӗн 13-мӗшӗ. (ТАСС). Официальнӑ пӗлтернӗ тӑрӑх, французсен америкӑн 5-мӗш армийӗнчи чаҫӗсем, тӑшман вӑйлӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пырса, питӗ кирлӗ темиҫе ҫӳллӗ вырӑна йышӑнса илнӗ. Икӗ арми фрончӗн ытти участокӗсенче малти отрядсем активлӑн ҫапӑҫнӑ.

Ҫанталӑк начар пулнӑ пирки, союзниксен авиацийӗ кӗрешӳ вӑйлӑнах хутшӑнма пултарайман.

Союзниксен эсминецсем ҫинчи артиллерийӗ, Италин хӗвелтухӑҫ ҫыранӗсен территорийӗнче поездсем ҫӳрессине чарма тӑрӑшса, вут-хӗм тӑкса тӑнӑ.

Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, американецсен 5-мӗш армин чаҫӗсем Черваро ятлӑ пункта тытса илнӗ.

ИТАЛИ ЫЙТӐВӖСЕМ ПИРКИ ӖҪЛЕКЕН КОНСУЛЬТАТИВНӐЙ СОВЕТӐН ӖҪӖСЕМ

АЛЖИР, январӗн 13-мӗшӗ. (ТАСС). Итали ыйтӑвӗсем тӑрӑх ӗҫлекен советӑн пиллӗкмӗш ларӑвӗ пулнӑ хыҫҫӑн, ҫакӑн пек пӗлтерӳ пичетлесе кӑларнӑ:

«Итали ыйтӑвӗсем пирки ӗҫлеме тунӑ консультативнӑй советӑн членӗсем юлашки вӑхӑтра ирӗке кӑларнӑ Италин тӗрлӗ пункчӗсене, ҫав шутрах Сицилипе Сардинне кайса ҫӳренӗ. Вӗсем вара Италин тӗрлӗ официальнӑй тата официальнӑй мар ҫыннисемпе паллашнӑ, ҫавӑн пекех союзлӑ тӗрлӗ организацисемпе тӗл пулса калаҫнӑ.

Январӗн 10-мӗшӗнче Неапольре советӑн пиллӗкмӗш ларӑвӗ пулса иртнӗ. Унта ҫаксем пулнӑ: Массигли господин (председатель пулса ертсе пыраканӗ)—Франци халӑхне ирӗке кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлекен комитетран, Макмиллан господин — Пӗрлешӳллӗ Королевствӑран, Вышинский юлташ—СССР-тан, Рейнхардт господин — США-ран, Р. Д. Мерфи господин вырӑнне.

Совет Италин политикӑпа экономикин хальхи лару-тӑрӑвӗ ҫинчен пӗлтерннине итленӗ, ҫавӑн пекех Бадольо маршалпа Итали правительствин ытти членӗсен шухӑшӗсемпе паллашма пултарнӑ».

ЮГОСЛАВИРИ ХАЛӐХА ИРӖКЕ КӐЛАРАССИШӖН КӖРЕШЕКЕН ҪАРӐН ВӐРҪӐ ӖҪӖСЕМ

ЖЕНЕВА, январӗн 13-мӗшӗ. (ТАСС). Югославирен пӗлтернӗ тӑрӑх, нимӗҫ ҫарӗсемпе усташсем Вӑтам Боснире малтанхи пекех наступлени туса пыраҫҫӗ. Травник секторӗнче пӗр нимӗҫ дивизийӗпе усташсем фронт линине татса кӗме хӑтланнӑ. Тӑшман атакисене пурне те сирсе янӑ. Танксемпе моторизованнӑй чаҫсем пулӑшнипе, нимӗҫсем фронта Банья—Лука хули енчен шӑтарса кӗрсе, Мрконич—Градпа Яйце тӗлне ҫитнӗ. Югославири халӑха ирӗке кӑларассишӗн кӗрешекен ҫар чаҫӗсем ҫав пункчӗсене хӑварнӑ. Халӗ ҫав секторта хаяр ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Тӑшман йывӑр ҫухатусем тӳсет. Хӗвелтухӑҫ Боснире Югославири халӑха ирӗке кӑларассишӗн кӗрешекен ҫар чаҫӗсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, малалла наступлени туса пыраҫҫӗ. Вӗсем Власеница (хулисӗр пуҫне тата Дринячӑпа Сребреницӑна тытса илнӗ. Фронтӑн ытти участокӗсенче тӗллӗк-тӗллӗн ҫапӑҫаҫҫӗ.

Югославири халӑха ирӗке кӑларассишӗн кӗрешекен ҫар чаҫӗсем Карловец—Огулин чугун ҫулӗ ҫинче пӗр шыв урлӑ каҫакан кӗпере юсама хӑтланакан нимӗҫ ҫарӗсене тапӑннӑ. 80 гитлеровеца ытла вӗлернӗ, 80 нимӗҫе тыткӑна илнӗ. 100 винтовка, 10 пулемет, пӗр миномет (минӑсемпе пӗрле) тата 14 бронированнӑй вагон тытса илнӗ.

АЛБАНИ ПАТРИОЧӖСЕМ ОККУПАНТСЕНЕ ВӖЛЕРЕҪҪӖ

СТАМБУЛ, январӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Албанин пуканелле влаҫӗсем Албанире партизансен юхӑмӗ вӑйланса пынӑ пирки питӗ пӑшӑрханаҫҫӗ. Нимӗҫсен „Донау цейтунг" ятлӑ фашистла хаҫачӗ Албанин „министрсен совечӗ" „правительствӑна хирӗҫ пыракан ҫынсемпе тата террористсемпе кӗрешме" (гитлеровецсем Албани патриочӗсене террористсем теҫҫӗ) хӑйне уйрӑм трибуналсем тума йышӑннине пичетлесе кӑларнӑ. Трибуналсем тума йышӑнни, чи малтан, „ертсе пыракан вырӑнсенче ӗҫлекен ҫынсене вӗлересси йышлӑланнинчен килнӗ", тет хаҫат.

Нумаях пулмасть Валона районӗнче хӗҫпӑшаллӑ патриотсем нимӗҫ офицерӗсем ларса пынӑ автомашинӑна тапӑннӑ та гитлеровецсене пурне те вӗлерсе пӗтернӗ, машинине ҫунтарса янӑ. Берат хулинче пуканелле „правительствӑн" темиҫе уполномоченнӑйне вӗлернӗ. Нимӗҫсен Берата янӑ карательнӑй отрядне партизансем пӗтӗмпе тенӗ пекех пӗтерсе тӑкнӑ.

ФРАНЦИН КОНСУЛЬТАТИВНАЙ АССАМБЛЕЙИН ЛАРАВЕСЕНЧЕ

Францире хирӗҫ тӑрса кӗрешекен организацисене пулӑшасси

РАБАТ, январӗн 13-мӗшӗ. (ТАСС). Рабатри радио пӗлтернӗ тӑрӑх, Францин консультативнӑй ассамблейинче Францире хирӗҫ тӑрса кӗрешекен организацисене пулӑшасси ҫинчен сӳтсе явнӑ.

Ҫав организацисен представителӗсем — Клодиус тата Гренье ҫапла каланӑ: ҫӗршыва ирӗке кӑлармашкӑн Францири хирӗҫлӗ юхӑма пулӑшма хӗҫпӑшал кӳрсе килмелле. Францире хирӗҫ тӑрса кӗрешекен патриотсене хӗҫпӑшал парса тӑма пур майсем те пур тата ҫав ҫар хатӗрӗсене Франции ҫитерме карапсемпе самолетсем те ҫителӗклех.

Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, ассамблея делегачӗсен пӗр группи Францире хирӗҫ тӑрса кӗрешекен организацисен представителӗсен ячӗпе резолюци сӗннӗ. Вӑл резолюцире Францири вӑрттӑн ӗҫлекен организацисене, континент ҫине тапӑнас тӗлӗшпе малти отряд вырӑнне шутласа, союзниксене вӗсене тивӗҫлипе хаклама чӗннӗ.

Де Голль генерал каланӑ тӑрӑх, нацие ирӗке кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлекен комитет ҫав резолюцие пӗтӗмӗшпех ырлать. Вӑл халь ҫар вӑйӗ шутланса тӑракан хирӗҫле юхӑм малашне те, мирлӗ условисенче, Франции чӗртекен вӑй пулса тӑрассине шанса тӑнине палӑртнӑ.

Франци консультативнӑй ассамблеи Францире хирӗҫле кӗрешекен организацисене пулӑшас ыйтупа ҫав организацисен представителӗсем сӗннӗ резолюцие йышӑннӑ.

АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКӖСЕМ ҪУРҪӖР-ХӖВЕЛАНӐҪ ГЕРМАНИ ҪИНЕ ТАПАННИ ҪИНЧЕН ТӖПЛӖН ПЕЛТЕРНИ

ЛОНДОН, январӗн 13-мӗшӗ. (ТАСС). Официальнӑй ушкӑнсенчен тухнӑ хыпарсем тӑрӑх, Америка бомбардировщикӗсем, январӗн 11-мӗшӗнче Ҫурҫӗр-Хӗвеланӑҫ Германи ҫине пырса тапӑннӑскерсем, пӗлӗтлӗ ҫанталӑкра ҫӗнӗ тактикӑпа усӑ курнӑ. Союзниксен истребителӗсемпе нимӗҫ самолечӗсем хушшинче Германин пӗтӗм хӗвеланӑҫ пайӗнче сывлӑшра ҫапӑҫу пулнӑ, вӑл виҫӗ сехете тӑсӑлнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусен районӗ Берлина ҫитиччен 90 мильӑра кӑна тӑракан пунктсенче пулнӑ. Америкӑн хӑйсен базине таврӑнман 59 бомбардировщикӗнчен хӑшӗ-пӗрисем Англи территорийӗ ҫине анса ларнӑ пулмалла, теҫҫӗ.

Берлинран 90 миля кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнелех вырнаҫнӑ Ошерслебенри «Фокке-Зульф» завочӗн тӗп ҫуртӗсене пурне те пысӑк сиен кӳнӗ. Ҫавӑн йышши истребительсем кӑларакан ытти заводсене аркатса тӑкнипе пула, Ошерслебенри завод «Фокке-Вульф—190» йышши истребительсем кӑларакан тӗп центр шутланнӑ. Брауншвейгра «Мессершмитт—110» йышши истребительсем кӑларакан завода фугаснӑй бомбӑсем пӑрахнипе пур ҫуртсене те, пӗр ҫуртсӑр пуҫне, ишнӗ тесе шутлаҫҫӗ. Хальберштадтри самолетсен ҫуначӗсене туса кӑларакан тӗп центр шутланакан Юнкерс заводне вӑйлӑ сиенленӗ. Сахалтан та икӗ пысӑк цеха тата пысӑк мар икӗ ҫурта тӳррӗмӗнех лекнине паллӑ тунӑ.

СОФИЯ ХУЛИНЕ СЫВЛАШРАН ТАПАННИ ҪИНЧЕН ПЕЛТЕРНИ

ЛОНДОН, январӗн 13-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, халӗ София хулине январӗн 10-мӗшӗнче союзниксен авиацийӗ сывлӑшран тапӑнни ҫинчен калакан тӗрӗс хыпарсене илнӗ.

Ҫав хыпарсем тӑрӑх, американецсен бомбардировщикӗсем тӑшманӑн 28 самолетне персе ӳкернӗ.

Ӗҫҫынни депутачӗсен Шупашкар хула Совечӗн депутачӗсене пӗлсе тӑма

1944 ҫулхи январӗн 18-мӗшӗнче, каҫхине 8 сехетре, пионерсен ҫуртӗнче (Карл Маркс урамӗ, 11-мӗш ҫурт) ӗҫҫынни депутачӗсен Шупашкар хула Совечӗн 23-мӗш сессийӗ уҫӑлать.

Сессире хулари шкулсен ӗҫӗсем ҫинчен сӳтсе-яваҫҫӗ.

Ӗҫҫынни депутачӗсен Шупашкар хула Совечӗн депутачӗсем сессине хӑйсен удостоверенийӗсемпе кӗреҫҫӗ.

ӖҪҪЫННИ ДЕПУТАЧӖСЕН ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ИСПОЛКОМӖ

Ответлӑ редакторӑн заместителӗ А. А. ЭСХЕЛЬ.

„Сельхозснабжени" Чӑваш конторине ӗҫлеме секретарь-машинистка кирлӗ. Ӗҫ укҫи—килӗшнӗ тӑрӑх. Ҫак адреспа ыйтса пӗлмелле: ул. Калинина, 34.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, секретарьпе заместителӗн — 4—26, парти пурнӑҫ пайӗн — 3—99, промышленноҫпа ялхуҫалӑх пайӗсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00512 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.